Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнченпе тухать

1 (8165) № * Шӑмат кун, 2014 ҫулхи кӑрлач (январь) уйӑхӗн 11-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

## Ҫӗнӗ ҫулта – ҫӗнни патне

Ӗҫ коллективӗсенче

***Ҫулталӑксен ылмашӑвӗнче 2013 ҫул та сисмесӗрех историе кӗрсе юлчӗ. Мӑн Сӗнтӗр райповӗшӗн вӑл 100 ҫулхи юбилейпа паллӑ пулчӗ. Паянхи сӑн ӳкерчӗкре (сулахайран сылтӑмалла) эсир асӑннӑ ӗҫ коллективӗнчи Алина Волкова бухгалтера тата профком ертӳҫине хӑйӗн аслӑ юлташӗпе Надежда Васильевӑпа куратӑр. Алина райпо тытӑмӗнче 7 ҫул вӑй хурать пулсан, Надежда Юрьевна професси картлашкипе райпори таварсемпе ваккӑн суту-илӳ тӑвакан пӗрлешӳӗн директорне ӳссе ҫитнӗ. «Ҫӗнӗ ҫула хамӑр туса ирттернӗ ӗҫсемшӗн пӑшӑрханмасӑр, тунӑ ӳсӗмсемшӗн савӑнса, аталану ҫулӗсене курса кӗтсе илтӗмӗр. Ӗҫри кӑтартусем ҫапла тума май параҫҫӗ. Ку вара вӑл – пирӗн пӗрлехи ӳсӗм», – терӗҫ кӗске сӑмахра нумай ачаллӑ тата сахал тупӑшлӑ ҫемьесенчи ачасем валли ирттерекен Раштав елкине активлӑ хутшӑннӑ хӗрарӑмсем. Кун пирки хаҫатӑн 5-мӗш страницинче вуласа пӗлме пултаратӑр.***

**А. БЕЛОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.**



Уяв кунӗсенче

## Ҫӗнӗ ФСК хута кайрӗ

Декабрӗн 30-мӗшӗнче Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев Шупашкар хулинче савӑнӑҫлӑ лару-тӑрура ҫӗнӗ физкультурӑпа спорт комплексне уҫнӑ ҫӗре хутшӑннӑ. Ку вӑл 2012 ҫултанпа республикӑра хута кайнӑ 26-мӗш комплекс. Вӗсене ӗҫе кӗртме федерацин, республикӑн тата вырӑнти бюджетсенчен 142,5 млн. тенкӗ тӑкакланӑ.

Хӑйӗн сӑмахӗнче республика Пуҫлӑхӗ ҫавна палӑртнӑ. Кун пек объектсене тӑвасси республикӑра малашне те пулса пырӗ. Ку вӑл пӗтӗмпех хамӑр ачасемшӗн, вӗсен пуласлӑхӗшӗн пӗлтерӗшлӗ.

## Икӗ ача сачӗ уҫӑлчӗ

Декабрӗн 30-мӗшӗнче Шупашкарта ҫӗнӗ икӗ ача сачӗ хута кайнӑ. Вӗсене уҫнӑ ҫӗре республика Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев та хутшӑннӑ. Строительсен урамӗнче 8-мӗш номерлӗ «Дворец детской радости» ача сачӗ хута кайнӑ. Проектпа вӑл 235 вырӑнлӑ. Кунти пӳлӗмсемпе туллин усӑ курса вара татах 65 вырӑн йӗркелеме пӑхнӑ.

10-мӗш номерлӗ «Веселые ладошки» ача сачӗ «Университет» микрорайонта вырнаҫнӑ. Вӑл 100 ача валли.

## Шупашкар – ҫӗнтерӳҫӗ

Шупашкар ҫӗр-шыври хуласен черетлӗ ӑмӑртӑвӗнче ҫӗнтерӳҫӗ пулса тӑнӑ. Чӑваш Ен тӗп хули «Город России. Национальный выбор» проект сасӑлавӗнче чи нумай – 167,3 пин сасӑ пухма пултарнӑ. Унченхи ҫул Шупашкар пиллӗкмӗш вырӑнта пулнӑччӗ.

Интернет-сасӑлава Раҫҫейри чи паллӑ та илӗртӳллӗ хулана палӑртассипе кашни ҫулах ирттереҫҫӗ. Унта регионсен тӗп хулисем хутшӑнаҫҫӗ.

## Раштав кӗллинче

Январӗн 7-мӗшӗнче Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев мӑшӑрӗпе Лариса Юрьевнӑпа Раштав кӗллинче пулнӑ. Ӑна Шупашкар тата Чӑваш митрополичӗ Варнава Шупашкар хулинче Пукрав-Татиана чиркӗвӗнче ирттернӗ.

Раштав кӗлли вӗҫленнӗ хыҫҫӑн республика Пуҫлӑхӗ вырсарни шкулӗн ӗҫӗпе паллашнӑ. Ӑна Пукрав-Татиана соборӗнче 2013 ҫулта уҫнӑ. Шкул тӗллевӗ – ачасен ӑс-хакӑл хăватне туллин уҫасси, православин нумай ҫулхи йӑли-йӗркине ӑнланма, унпа хӑйсен хушшинчи ҫыхӑнӑва туйма вӗрентесси.

## Мускав саламӗсем

Яланхи пекех Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев хӑйӗн ҫуралнӑ кунне январӗн 8-мӗшне ӗҫ вырӑнӗнче кӗтсе илнӗ. Паллӑ ӗнтӗ, саламсем сахал мар пулнӑ. Телефонпа Михаил Васильевича Раҫҫей Президенчӗ Владимир Путин, РФ Правительствин Председателӗ Дмитрий Медведев саламланӑ.

Михаил Игнатьев ячӗпе Раҫҫей парламенчӗн икӗ палатин ертӳҫисенчен те саламсем ҫитнӗ, Валентина Матвиенко тата Сергей Нарышкин саламланӑ. Саламлакансем шутӗнчех – РФ Президенчӗн Администрацийӗн ертӳҫи Сергей Иванов, Раҫҫей Правительствин тата республика Министрсен Кабинечӗн членӗсем, федерацин тата республика ведомствисен ертӳҫисем, федераци субъекчӗсен пуҫлӑхӗсем, уйрӑм граждансем.

Республикӑра

## Пулӑшу мелӗ улшӑнать

Декабрӗн 25-мӗшӗнче Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗн ларӑвӗнче Алла Самойлова вице-премьер Чӑваш Республикин «О внесении изменений в Закон Чувашской Республики «О форме предоставления мер социальной поддержки по оплате жилого помещения и коммунальных услуг отдельным категориям граждан» саккун проектӗпе паллаштарнӑ.

Хальхи вӑхӑтра федераци ҫӑмӑллӑхӗсемпе усӑ куракансене (ветерансен хӑш-пӗр категорийӗсене, инвалидсене, Чернобыльти катастрофӑна пӗтерме хутшӑнса радиаци илнисене т. ыт. те) пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ услугӑсемшӗн тӳлессипе социаллӑ пулӑшупа тивӗҫтерес тӗлӗшпе уйӑхсерен укҫан паракан тӳлев пӑхса хунӑ. Ӑна категорисем тӑрӑх уйӑрнӑ.

Анчах та уйӑхсерен парса тӑракан тӳлев вырӑнне пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ услугӑсемшӗн тӳлессипе Раҫҫей Федерацийӗн законодательствипе палӑртнӑ социаллӑ пулӑшу мелӗсене пур чухне те тивӗҫтермест. Саккун проектӗнче федераци ҫӑмӑллӑхӗсемпе усӑ куракансене малашне пулӑшу мелӗсемпе чӑннипе усӑ курнин калӑпӑшне кура саплаштарассине пӑхса хунӑ. Тӳлевсене федераци бюджетӗнчен уйӑрӗҫ.

**Чӑваш Ен Сывлӑх сыхлавӗпе социаллӑ аталану министерствӗ.**

Хаксем

## Эрех, пирус, бензин

2014 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнчен тытӑнса таса спиртӑн пӗр литрӗн акциз хакӗ 400 тенкӗрен 500 тенкӗне ҫитрӗ. Ҫавӑнпа та водкӑн пӗр кӗленчин чи пӗчӗк вырӑнне унчченхи пек 170 тенкӗ вырӑнне 199 тенкӗпе танлашать. Сӑмах май эрех-сӑра продукчӗсене майӑн 1-мӗшӗччен кивӗ акциз маркисемпех сутма ирӗк панӑ.

Эрехне вара ҫынсем ытларах чухне уявсенче ӗҫеҫҫӗ пулсан, пирус туртакансен хӑйсен бюджетне тепӗр хут пӑхса тухма тивет. Ҫӗнӗ акцизсене шута илсен пирусӑн чи йӳнӗ пачки 40 – 45 тенкӗ тӑма тытӑнать. Хак 30 процент ӳсет. Ытларах вӑл йӳнӗрех, хаклӑ мар маркӑллӑ сигаретсене пырса тивӗ.

Бензин та хакланать. Чӑваш Ен Экономика аталанӑвӗн, промышленноҫ тата суту-илӳ министерствин сайтӗнче ҫак информаци вулатпӑр: «4-мӗш класлӑ автомобиль бензинӗн акцизне 2014 ҫулта 5,3 процент индексациленӗ, халӗ вӑл 1 тоннӑшӑн 9916 тенкӗпе танлашать. 5-мӗш класлӑ бензина 12,2 процент индексациленӗ, 1 тонна хакӗ – 6450 тенкӗ». Пӗтӗмӗшле илсен автомобиль хуҫисен бензиншӑн 10 – 13 процент ытларах тӳлеме тивӗ.

Ҫапла вара юмахри пекех пулса тухать. Ҫул ҫӳрекен мӗнле ҫул кӑна суйласа ан илтӗр – е эрех магазинне, е пирус киоскне, е тата сывӑ пурнӑҫ йӗркине тытса пырассипе дачӑна ҫул тытас тесе автозаправкӑна – пур ҫӗрте те ҫӗнӗ хаксем кӗтсе илӗҫ.

## Социаллӑ пурнӑҫ лайӑхланнӑ

Рейтинг

Граждан обществин аталанӑвӗн Раҫҫей регионӗсем социаллӑ пурнӑҫ енӗпе хӑйсене мӗнле туйнин иккӗмӗш рейтингне хатӗрленӗ. Унта рейтингӑн август уйӑхӗнче палӑртнӑ пӗрремӗш кӑларӑмӗпе танлаштарсан регионсем хӑйсене мӗнлерех туйнин шайӗ пысӑкланнин туртӑмӗ сисӗнет. Рейтингра килӗшӳллӗн Чӑваш Ен регионсен пӗрремӗш ушкӑнне (пӗтӗмпе вӗсем тӑватта) кӗнӗ – 66 балл (иртнинче 64 балл) пухнӑ.

Тӗпчев кӑтартӑвӗсене тӗпе хурса рейтинга хатӗрлекенсем пӗтӗмӗшле кӑтарту – социаллӑ пурнӑҫ енӗпе хӑйсене мӗнле туйни – сӗннӗ. Ӑна «балсен шучӗ регионсен шучӗ» формулӑпа шутланӑ. Август уйӑхӗнчи пӗрремӗш рейтингра вӑл 57,924 пулнӑ пулсан – иккӗмӗшӗнче 59,658 шайне хӑпарнӑ. Ҫакӑ Раҫҫей гражданӗсем социаллӑ пурнӑҫ енӗпе хӑйсене лайӑхрах туйма пуҫланӑ теме май парать.

## 3 ҫул – округра пӗрремӗш

Граждан обществин аталанӑвӗн фончӗ ирттернӗ рейтингра килӗшӳллӗн Чӑваш Ене социаллӑ лару-тӑру шайӗпе чи лайӑх регионсен ушкӑнне кӗртнӗ. Ыйтӑма Раҫҫейӑн 79 регионӗнчи 56900 респондент хутшӑннӑ.

Хаклавӑн пур критерийӗсене шута илсен Чӑваш Республики хӑйӗн 2013 ҫулхи пӗрремӗш рейтингӑн позицийӗсене сыхласа хӑварнӑ кӑна мар, социаллӑ лару-тӑру кӑтартӑвӗсем татах лайӑхланнӑ. Ҫакӑ вӑл юлашки вӑхӑтра республикӑра пулса иртнӗ ырӑ улшӑнусемпе ҫыхӑннӑ.

Республика бизнесӑн пӗтӗмӗшле эффективлӑхӗн тата экологи яваплӑхӗн рейтингӗнче Раҫҫейре пӗрремӗш вырӑн йышӑннӑ. Чӑваш Ене физкультурӑпа спортри ҫитӗнӳсемшӗн «Раҫҫей регионӗ» номинаципе наци премине панӑ.

Вӗренӳӗн тата сывлӑха сыхлассин системисем ӑнӑҫлӑ аталанаҫҫӗ. Промышленноҫпа строительство отраслӗсенче те ырӑ улшӑнусем курӑмлӑ. Чӑваш Ен виҫӗ ҫул хушши ӗнтӗ Атӑлҫи федераци округӗнчи субъектсем хушшинче 1 пин ҫын пуҫне пурӑнмалли ҫурт-йӗр хута ярассипе пӗрремӗш вырӑн йышӑнать.

Агропромышленноҫ комплексӗнче те пысӑк проектсем пурнӑҫа кӗртнӗ. «АККОНД» кондитер фабрикинче, Вӑрнарти ҫусӑрлатнӑ типӗ сӗт заводӗнче, Шупашкарти «Букет Чувашии» сӑра фирминче производство ҫӗнелет. Етӗрнере ҫӗнӗ сӗт завочӗ, «Юрма» агрохолдингра чӑх-чӗп ашне тирпейлемелли завод ӗҫе кӗртнӗ.

Ҫынсене ӗҫпе тивӗҫтерессипе те кӑтартусем лайӑхланнӑ. Ӗҫ шыракансен ӗҫ тупса парассипе Чӑваш Республики Раҫҫей субъекчӗсем хушшинче 2-мӗш, инвалидсене ӗҫпе тивӗҫтерессипе 5-мӗш вырӑн йышӑнать.

## Районта: ҫӗнӗ ҫул умӗн тата хыҫҫӑн

**Декабрӗн 29-мӗшӗ**. Тересре пурӑнакан А. Скворцова 90 ҫул тултарнӑ. Район администрацийӗ ячӗпе районти социаллӑ хӳтлӗх пайӗн пуҫлӑхӗ В. Аникина юбиляра РФ Президенчӗн В. Путинӑн салам ҫырӑвне тата район администрацийӗн Тав ҫырӑвне тата асӑнмалӑх парне парса чысланӑ.

**Декабрӗн 31-мӗшӗ.** Ҫӗнӗ ҫул умӗн Турай ял тӑрӑхӗнче ҫӗнӗ ҫемье йӗркеленнӗ. Ҫакна ҫирӗплетсе Анаткасси ялӗнчи Валентинӑпа Юрий Николаевсем районти ЗАГС пайӗнче алӑ пуснӑ.

**Январӗн 3-мӗшӗ.** Муркашри ҫӗнӗ ҫул чӑрӑшӗ патӗнче ачасемпе ашшӗ-амӑшӗсем уяв мероприятийӗсене хутшӑннӑ. Хӗл мучипе тата Юр пикепе пӗрле савӑннӑ, ҫӗнӗ ҫул кучченеҫӗсене тивӗҫнӗ.

Ҫак кун сывлӑхпа спорт вунӑ кунлӑхӗн ӑмӑртӑвӗсем пуҫланнӑ. Муркашри вӑтам шкулта районти шкул ачисен шашка-шахмат турнирӗ иртнӗ. Вӑтам шкулсен 7 команди, тӗп шкулсен 6 команди хутшӑннӑ.

**Январӗн 4-мӗшӗ**. «Сывлӑх» ФСК пӑрӗ ҫине хоккейла вылякансем пухӑннӑ. «Раштав тӗл пулӑвӗсенче» Юнкӑ, Сыпай, Муркаш тӑрӑхӗнчи хоккеистсен, Шупашкарти «Арсенал» тата Ильич ячӗпе хисепленекен хусалӑхӑн командисем хутшӑннӑ.

**Январӗн 5-мӗшӗ.** Районта – пӗрлехи спорт кунӗ. «Сывлӑх» ФСК спорт залӗнче волейболистсен районти чи вӑйлӑ командисем вӑй виҫнӗ: «Передовик», «Моргаушская» МСО, «Райбыт» тата районти шалти ӗҫсен пайӗн команди. «Передовик» мала тухнӑ.

Малтанхи кун пуҫланнӑ хоккей турнирӗ Сыпайсен командин ҫӗнтерӗвӗпе вӗҫленнӗ.

«Сывлӑх» ФСК тренажер залӗнче пирӗн районта пӗрремӗш хут пауэрлифтинг (акӑлчан чӗлхинчен куҫарсан – «вӑй»+«ҫӗклесси») енӗпе ӑмӑрту иртнӗ. Спортӑн ҫак «йывӑр» тӗсӗнче хӑйсене тӗрӗслесе пӑхас тӗллевпе 11 ҫын арҫын ӑмӑртӑва хутшӑннӑ. Ҫак ӑмӑртӑва ирттерессине малашне йӑлана кӗртме шутлаҫҫӗ.

Ҫак кунах ФСК бассейнӗнче ҫемье командисем ишсе ӑмӑртнӑ. Муркаш ял тӑрӑхӗнчи Лоцмановсен, Потаповсен тата Петровсен ҫемйисем унта хастар хутшӑннишӗн ыттисемшӗн тӗслӗх пулса тӑнӑ.

**Январӗн 6-мӗшӗ.** Муркаш районӗн вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗнче ӗҫлекенсен спартакиади иртнӗ. Муниципалитет ӗҫченӗсем 3 команда йӗркеленӗ. Район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Р. Тимофеев та, унӑн ҫумӗсем те спартакиадӑна ыттисемпе пӗрле активлӑ хутшӑннӑ.

**Январӗн 7-мӗшӗ.** Христос ҫуралнин уявне илемлӗ чӑн тавра ирттерме район администрацийӗн ЗАГС пайӗн залне ача-пӑча чылай пухӑннӑ. Муркашри православи чиркӗвӗн настоятелӗ Федор атте Христос ҫуралнин историйӗпе паллаштарнӑ. Муркаш райпо Канашӗн ертӳҫи Б. Васильев вара райпо ирттернӗ «Ачасене – шӑккалат» ыр кӑмӑллӑх акцине 3 пин ытла ҫын хутшӑннине пӗлтернӗ. Ҫапла вара районти сахал тупӑшлӑ, нумай ачаллӑ ҫемьесенче ӳсекен ачасем кучченеҫлӗ пулнӑ.

**Январӗн 9–10-мӗшӗсем.** Тӑххӑрмӗш классенче вӗренекенсем районти Ҫамрӑксен парламенчӗн кубокне ҫӗнсе илессишӗн волейбол ӑмӑртӑвӗсене хутшӑннӑ.

Ҫӗнӗ ҫулта пирӗн районта ҫуралнӑ пӗрремӗш ача – Москакасси ял тӑрӑхӗнчи Касеевсен ҫемйинчи пепке. Ашшӗ-амӑшне телей парнеленӗ Аэлита – ҫемьере иккӗмӗш ача.

**Январĕн 12-мĕшĕ – РФ прокуратура ĕçченĕн кунĕ**

# Саккунлăхра вĕсен тӳпи пысăк



Раççей Федерацийĕн Президенчĕн 1995 çулхи декабрĕн 29-мĕшĕнчи указĕпе килĕшӳллĕн январĕн 12-мĕшĕнче çирĕп йăлана кĕнĕ тăрăх çулсеренех РФ прокуратура ĕçченĕн кунне паллă тăваççĕ. 1722 çулта шăпах çак кун 1 Петĕр Указĕ кун çути курнă, унта çапла çырнă: «сенат çумĕнче генерал-прокурор тата обер-прокурор, çавăн пекех прокурор коллегийĕ пулмалла...». Çак тапхăртан пуçласа асăннă орган вăйра тăрать те ĕнтĕ.

Муркаш районĕнчи прокуратура йĕркеленнĕренпе кăçал утмăл пилĕк çул çитрĕ. Çак сумлă вăхăтра саккунлăх хуралĕнче вăй хуракансем чылай çынна тĕрĕслĕх тупма пулăшнă, йĕркене пăснисене вара ответ тыттарнă. Професси уявĕ умĕн район прокурорĕпе, юстици советникĕпе Сергей Фирсовпа калаçу ирттертĕм, иртнĕ çулталăкри ĕçе тишкерме ыйтрăм.

– Асăннă орган йĕркеленнĕренпе вăхăчĕ чылай иртрĕ, унăн тĕп тĕллевĕ вара малтанхи пекех çирĕп. Прокуратура йĕркене пăсакансене саккунлăх чи çӳллĕ шайра пулмаллине тата ăна яланах пăхăнмаллине çирĕплетсе парать. Çакна тĕпе хурса ку орган Конституцире çирĕплетнĕ кашни енĕн саккунлă прависене туллин хӳтĕлет. Палăртса хăваратăп, йĕркене пĕтĕмĕшле пăхăнасси мĕнле пурнăçланнинче прокуратура ĕçченĕсен тӳпи пысăк. Пирĕншĕн вара пурте пĕр тан: пуçлăх-и вăл е ахаль çын – йĕркене пăснă пулсан кашнин ответ тытмалла. Обществăри саккунлăхпа йĕркелĕхе прокуратура гарантилет.

Пирĕн ĕçри тĕп утăм – гражданасен прависене тивĕçлĕ шайра хӳтĕлесси, коррупципе çивĕччĕн кĕрешесси тата ытти йĕркесĕрлĕхе аталанма парас марри. Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх тата пенси сферинчи, çавăн пекех ĕç сыхлавĕнчи саккунлăх кулленхи тимлĕхре пулнă май иртнĕ çул ку тĕлĕшпе 290 асăрхаттару çырнă, должноçри 253 ĕçчене дисциплинарлă явап тыттарнă, 651 ыйту-çăхав суда тăратнă.

Ĕç сыхлавĕпе саккуна пăснă факт та чылай: ĕç укçи вăхăтра паманни е ăна пачах тӳлеменни. Çапла вара прокуратура тĕрĕслевĕ хыççăн граждансен интересĕсене хӳтĕлесе пĕтĕмпе 5,5 миллион тенкĕ ытла укçа таврăнăç тунă. Ашшĕ-амăшĕнчен пĕр миллион ытла алимент укçи шыраса илнĕ.

Должноçри ответлă çынсем йĕркене пăснă тата вĕсем хăйсене шаннă ĕçе тивĕçлĕ шайра пурнăçламан фактсем тĕл пулаççĕ. Граждансен çырăвĕсене вăхăтра пăхса тухманшăн, çавăн пекех ку тĕлĕшри ытти çитменлĕхшĕн хăш-пĕр ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене административлă майпа ответ тыттарнă.

Район прокуратурин хушăвне тĕпе хурса Çатракасси ял тăрăхĕн администрацине тепĕр вырăна куçарассине пăрахăçлаттарнă.

Коррупципе кĕрешессинче прокуратура пысăк пĕлтерĕшлĕ. Иртнĕ çул йĕркене пăснă фактсенче коррупци сĕмĕллĕ преступленисем пулнă. 7 ял тăрăхĕн пуçлăхне административлă майпа ответ тыттарнă. Район прокуратури тĕрĕслев ирттернĕ хыççăн Шомикри психоневрологи интерначĕн директорĕ тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă.

Граждансемшĕн прокуратура органĕ яланах саккунлăх хуралĕнче, вĕсен вара пирĕн пата тĕрĕслĕх шыраса килме именмелле мар. Çынсем пирĕн пата тĕрлĕ ыйтупа тăтăшах килеççĕ. Çавна май иртнĕ çул гражданасенчен 201 çăхав-çыру илнĕ, 61-ĕн ыйтăвне тивĕçтернĕ.

Район прокуратурин коллективĕ **(сăн ӳкерчĕкре)** ĕçе чунпа парăннă тата яваплăха туякан çынсенчен тăрать. Чăваш Республикин прокуратури çулсеренех конкурс ирттерет. Палăртма кăмăллă, ăна пĕтĕмлетнĕ май Муркаш районĕн прокуратури республика шайĕнче чи ăнăçлă коллектив пулнине палăртнă.

– Район прокуратури малашне те хăй тивĕçне туллин пурнăçласса шансах тăрăпăр. Саккунлăха çирĕп сыхласси яланах тĕп вырăнта пултăр. Професси уявĕ ячĕпе вара сире тата ытти ĕçченсене чи малтан çирĕп сывлăх, ĕçре ăнăçу, çемьере килĕшӳ сунатăп.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

**ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПРОКУРАТУРИН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ ТАТА ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Професси уявĕпе сире пĕтĕм кăмăлтан саламлатăп!

Хисеплĕ те яваплă «патша куçĕ» статуса тивĕçнĕ прокуратура органĕсем Раççейре виçĕ çĕр çула яхăн маларах çуралнă. Паян вĕсем патшалăх органĕсен системин пысăк пĕлтерĕшлĕ органĕсенчен пĕри пулса тăраççĕ.

Прокуратура ĕçченĕсен профессионализмне, принциплăхне, вĕсем хăйсен тивĕçне ответлăха туйса пурнăçланине пула Чăваш Республикинче саккунлăха пăхăнассине тивĕçтересси тухăçлă пулса пырать, унăн право культури ӳсет.

Раççей прокуратурин хисеплĕ традицийĕсене сыхласа хăварнă тата хăйсен хаклама çук опытне çамрăк ăрăва паракансене уйрăмах пысăк тав сăмахĕ калатăп.

Çавна шанса тăратăп. Прокуратура сотрудникĕсен ĕçри тата харпăр хăйсен пахалăхĕсем малашне те гражданасен прависене хӳтĕлессипе тата тĕрĕслĕх принципĕсене сыхлассипе хăйсен тивĕçĕсене чыслăн пурнăçлама пулăшса пырĕç.

Сире çирĕп сывлăх, çăмăл мар ĕçĕрте ӳсĕмсем, телей тата ăнăçу сунатăп!

**М. ИГНАТЬЕВ,**
**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ.**

**ПРОКУРАТУРĂН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ, ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире хăвăрăн професси кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Районти лару-тăру лăпкă пуласси сирĕн ĕçĕртен, эсир хăвăр тивĕçе тӳрĕ кăмăлпа туса пынинчен нумай килет. Эсир районта пурăнакансем, предприятисемпе организацисен ертӳçисем саккуна пăхăнччăр тесе тăрăшатăр. Кулленхи ыйтусене татса панă май район сучĕпе, суд приставĕсемпе, районти шалти ĕçсен пайĕпе, налук органĕсен ĕçченĕсемпе, право йĕркине сыхлакан пур органсемпе те тачă çыхăнса ĕçлетĕр. Çакă вара саккуна пăхăнса пурăнассинче татăклă ырă утăмсем тума май парать. Çул çитмен çамрăксене право йĕркине пăсассинчен сыхлас тесе те эсир нумай тимлетĕр. Граждансен Конституципе пăхса хăварнă прависемпе ирĕкĕсене хӳтĕлетĕр. Хăвăрăн кулленхи ĕçĕрпе эсир пурнăçра тĕрĕслĕх çĕнтернине, кашнинех пурнăçра саккуна пăхăнса пурăнмаллине кăтартса паратăр. Тавах сире çакăншăн.

Эсир малашне те хăвăрăн тивĕçĕре тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласа пырасса шанатăп. Саккунлăх сирĕн малашнехи ĕçре те тĕп вырăнта пултăр. Пурне те сире çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, телей сунатăп. Ĕçĕр яланах ăнса пытăр. Çемьере вара ăнланупа килĕшӳ пултăр.

**Р. ТИМОФЕЕВ,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕ.**

# Кам айăплă тата мĕн тумалла?

**Çул çитменнисен ыйтăвĕсемпе**

Çулталăка пĕтĕмлетсе пирĕнтен ытларахăшĕ усăллă та ырă ĕçсене аса илет. Калайкассинчи вăтам шкулта вĕренекен хăш-пĕр ачасен вара кун пирки пуç ватма та кирлĕ мар, мĕншĕн тесен вĕсем Çĕнĕ çула ытла та шавлă лару-тăрура кĕтсе илнĕ – районĕпе шавламалăх та çитрĕ. Çул çитменнисемпе ĕçлекен тата вĕсен прависене хӳтĕлекен районти комиссин иртнĕ çулхи юлашки ларăвĕнче те çак «событирен» пăрăнса иртмерĕç паллах.

Калайкассинчи вăтам шкулти вăтам сыпăкра вĕренекенсен елка уявĕ кăнтăрлахи пĕр сехетре пуçланмалла пулнă, унччен вара чăрăш тавра кĕçĕннисем савăннă. Çаксем Хĕл мучипе Юр пикене сăвăсем каланă тата юрласа ташланă вăхăтра вара 8 класра вĕренекен пĕр «чăнкă» каччă елкăна хатĕрленме тытăннă. Ĕçĕ ак мĕнле пулса иртет.

Хăйĕнчен кĕçĕнрех ачана, 6 класра вĕренекенскере, вăл килĕнчен эрех илсе килме хушать иккен. Лешĕ шĕвеке витĕр курăнакан пластик кĕленчепе илсе килет – килĕнче эрех тытса ĕçес йăла никамăн та çукран ашшĕ-амăшĕ пур-çук эрехне пытарса питĕрсех лартман пулнă, куç курман вырăнарах лартнă кăна. Çапла вара ача шкула кĕленчепе çитет те ăна аслине парать. Лешĕ хăйĕн тавра юлташĕсене хăвăртах пухать, 5–8 класра вĕренекен 6–7 ача пуçтарăнать: пĕрисем класри хывăнса тăхăнмалли пӳлĕме мĕншĕн пымаллине пĕлсех килеççĕ, теприсем – ăнсăртран. Ялти лавккана та çав кун ачасем темиçе хутах çитеççĕ – 18 çул тултармансkерсем сăра туянаççех(?).

Ачасем Çĕнĕ çул «ĕçки» тăваççĕ: кам ĕçет, кам – сурса пăрахать. Ĕçе пуçаракан вара шĕвеке тиркеменрен вилес патнех çитет мĕн. Ăна Çĕнĕ çул уявĕ вăхăтĕнче шкулта дежурствăра тăнă полици сотрудникĕ, ГИБДД районти уйрăмĕн пуçлăхĕ Сергей Иванов асăрхать. Васкавлă медицина пулăшăвĕн бригадине чĕнсе илеççĕ. Саккăрмĕш класри ачана больницăна илсе каяççĕ.

Халĕ çак ача сывалса тухнă, анчах та хăйĕн «паттăрлăхĕпе» хăйĕн, ашшĕ-амăшĕн, шкулăн ятне-сумне варалание ăнланчĕ-ши? Эрех илсе пынă ачаран вăл маларах темиçе хутчен те укçа ыйтнă, хăратнă мĕн (çакă ларура паллă пулчĕ) – лешĕ паман, çапла эрех илсе пыма тивнĕ те унăн. Укçине тата çак пуçаруçă кам валли пухнă-ши? Кĕленче илсе килмесен мĕн тăватăп тесе хăратнă-ши? Çапла, ыйту нумай. Хуравĕсене тупма, ответлисене явап тыттарма пакунлисен те, шкулăн та, ашшĕ-амăшĕсен те тачă çыхăнса ĕçлеме тивĕ. Хальлĕхе вара саккунпа килĕшӳллĕн кашни «айăплă» ачашăн ашшĕ-амăшĕн штраф тӳлеме тиврĕ.

**Н. ДИМИТРИЕВА.**

# Нуши те пулнă, лайăххи те

**Юбилей**



18 çулхи каччă Алексей Петров 1942 çулхи июнь уйăхĕнче хăйĕн ашшĕне Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине ăсатать, хыççăнах август уйăхĕнче, хăй те вăрçа тухса каять.

92 стрелоксен уйрăм дивизине лекнĕ Шетмĕпуç тăрăхĕнчи Сарчак каччи Мускав, Калуга патĕнчи çапăçусене хутшăнать. Калуга патĕнче аманать – вĕсем нимĕçсен бомба «çумăрĕ» айне лекеççĕ. Снаряд ванчăкĕсем чĕркуççие лексе салтака утайми тăваççĕ. Упалене-упалене, малалла шуса хамăрăннисем патне çитет вăл, лаша урапи çине хăпарса ларма вăй çитеретех. Сывалмалла-çке, тăшмана çĕнтермелле, малалла яма юрмасть.

Малтанах Мускав çывăхĕнчи Песочный поселокри госпитальте сипленнĕ хыççăн Алексей Петровича Чул Хула облаçĕнчи Выксăри госпитале ăсатаççĕ. Госпиталь хыççăн мотоциклист салтак Польшăна çитет. Кунти Белосток хули патĕнче нимĕçсем кăна мар, вырăнти тăшмансем те хуçаланнă. Çавсем шăпах пирĕн салтаксем çине çĕрлехи вăхăтра тапăнса çарсене хавшатнă та.

Алексей Петровичпа тепĕр виçĕ салтака разведчик пулма хатĕрлеççĕ: вăхăт сахал – чи кирлĕ пĕлĕве кăна параççĕ. Çапла пĕрре вĕсем нимĕçсем сыхлакан питĕ пĕлтерĕшлĕ склада тытса илеççĕ. «Сакăр нимĕçе çĕçĕпе тирсех вĕлертĕмĕр ун чух. Эсĕ мар тăк – сана», – çав самантсем асран тухмаççĕ ветеранăн. Çак ĕçе пурнăçланă хыççăн вĕсене Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ парса чыслаççĕ. Наградисем вара сахал мар – Çапăçури хастарлăхшăн, Мускава хӳтĕленĕшĕн, Жуков медалĕ, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин орденĕ тата ыттисем те.

Вăрçă пĕтнине Алексей Петрович Берлинтан 60 çухрăмра пулнă чух пĕлет.

Вăрçă пирки аса илнĕ чух вара ветеран хăйĕн юлташĕ, пушкăрт, питĕ лайăх пулнине калама нихăçан та манмасть. «Яланах пĕр-пĕрне пулăшнă», – тет.

Вăрçă пĕтнĕ хыççăн салтак хăйĕн службине çав вырăнтах ирттерет, киле вара 1947 çулта таврăнать. Тăван хуçалăхра тăрăшма пуçлать: бригадирта, платникра, строительсен бригадирĕнче...

1950 çулта вăл Шетмĕпуçĕнчи шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентнĕ Ефросиния Ильинична Ильинапа пĕр çемье çавăрать. Çĕрпӳ районĕнчи Çĕньялта çуралнă, учительсен институтĕнче вĕреннĕ хĕр кунта направленипе ĕçлеме килнĕ. Вăрçă пуçланнă çул 10 класс пĕтернĕскерĕн окоп та сахал мар чавма тивнĕ. Тылри ытти йывăр ĕçсем те унран пăрăнса иртмен паллах. «Питĕ сивĕччĕ, ăшăнма ниçта кĕме çукчĕ. Окоп чавнă хыççăн хваттере часрах ăшăнма чупаттăмăр. Питĕ шыв ĕçес килетчĕ ун чух, хваттер хуçи сивĕ шыв ан ĕçĕр тесе яланах калатчĕ... Çапла, çыннăн нушине те, лайăххине те курас пулать», – тет шкулта 33 çул ĕçленĕ учитель ветеран. Вăл та 90 çула пуснă ĕнтĕ.

Алексей Петровичпа Ефросиния Ильинична **(сăн ӳкерчĕкре)** ултă ача пăхса ӳстерсе ура çине тăратаççĕ. Ачасемпе пĕрлех вĕсен кил хуçалăхĕнче пысăк сад та çитĕнет. Улмуççи, ытти тĕрлĕ çырла тĕммисем чылай хунаттарнă вĕсем, сутма та тăтăшах çӳренĕ – пысăк çемьене тупăшĕ те ытларах кирлĕ пулнă...

Паян вара хисеплĕ ватăсем Ирина хĕрĕн çемйипе пурăнаççĕ. 90 çул тултарнă ятпа Алексей Петровича район администрацийĕ ячĕпе районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи В. Аникина саламласа парнепе савăнтарчĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Афган вăрçине халалланă

**Конкурс**

Пирĕн çарсене Афганистанран илсе тухнăранпа 25 çул çитнĕ май районта шкул ачисем хушшинче конкурс ирттереççĕ. 1979 – 1989 çулсенчи Афган вăрçине халалланă материалсене район администрацийĕн вĕренӳ тата çамрăксен политикин пайĕн методкабинетĕнче (Алевтина Рожкова) 2014 çулхи февралĕн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Конкурса шкул ачисен пурин те хутшăнма ирĕк пур. Конкурс материалĕсене ирĕклĕ формăпа хатĕрлемелле. Кусем вĕсем ал çырăвĕсем те, компьютерпа хатĕрленĕ е сăн ӳкерчĕк материалĕсем те пулма пултараççĕ. Афган вăрçипе çыхăннă пур ыйтăва та хускатма юрать. Ĕçсен калăпăшĕ 10 страницăна яхăн пулмалла. Материалсене хатĕрленĕ чухне камсемпе калаçнине, информацие ăçтан илнине кăтартсан аван.

Конкурс материалĕсенче мĕнле темăсене хускатма сĕнетпĕр-ха? Кусем вĕсем Афганистан çĕр-шывĕ тата унта пурăнакан халăх, вăрçă мĕн пирки тата мĕнле пуçланнă, Афган вăрçин тапхăрĕсем, унăн синкер саманчĕсем (пысăк çар операцийĕсем, хăрушă çапăçусем, разведка, тыткăна лекни т. ыт. те), вăрçă мĕнле тата мĕн пирки вĕçленнĕ, Афган вăрçинче виллнисене асăнса лартнă палăк, вăрçă ас тăвăмне тĕпе хурса районта туса пыракан ĕç-хĕл (асăну каçĕсем, культурăпа спорт мероприятийĕсем, паттăрлăх урокĕсем т. ыт. те), хăвăр ялта пурăннă е пурăнакан, хăвăр шкулта вĕреннĕ Афган вăрçин ветеранĕн хăсмечĕ пирки.

Конкурс материалĕсене хак пама комисси йĕркеленĕ. Унăн йышĕнче çар комиссарĕ А. Кочуров полковник, Афган вăрçин музейĕн ертӳçи Е. Ерагин, район хаçачĕн редакторĕ А. Тихонов, район администрацийĕн вĕренӳ тата çамрăксен политикин пайĕн пуçлăхĕ З. Дипломатова, район музейĕн директорĕ Т. Ермолаева, Афган вăрçин ветеранĕсем К. Петровпа В. Киршев тата В. Семенов, ачасен районти пултарулăх çурчĕн директорĕ А. Рожкова.

Пурне те ăнăçу сунатпăр конкурсра!

**Конкурс комиссийĕ.**

# Пирĕн штатра тăман корреспондент 90 çулта

**Район кунне хатĕрленнĕ май**



Çĕр-шыва хӳтĕлесси – арçын тивĕçĕ, теççĕ те, çав сумлă ĕçри йывăрлăхсемпе çухатусене тата çарти интереслĕ пурнăçа салтак пăтти çисе курнă çын çеç туллин уçса пама пултарайратъ тесе шутлатăп. Çак тĕрĕслĕхе Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин фрончĕсенче хăйсен сывлăхĕ пирки шутламасăр, пурнăçне шеллемесĕр тăшман çине ыткăннă, нумай çапăçура ăна тĕппипе çапса аркатса çĕнтерĕве çывхартнă совет салтакĕсемпе тĕл пулса калаçни тепĕр хут çирĕплетсе парать. Салтак пурнăçĕ тата Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи ветерансен куçĕпе...

– 1941–1945 çулсенчи хаяр вăрçăра эпĕ Невский, Суворов, Кутузов хӳтĕленĕ Раççейшăн çапăçрăм. Тăшман вилĕм сапаланă вăхăтра урăхла пулма та пултарайман: Раççей-çке манăн кил! Ăна вара нимĕнпе те улăштарма çук, – çĕр-шыва юратнине палăртса калаçать Юнкăпуçĕнче пурăнакан 90 çулхи Иван Алексеевич Васюхин артиллерист тата пирĕн штатра тăман корреспондент.

1924 çулхи январĕн 5-мĕшĕнче çуралнă ветеран çĕр-шывра совет самани ураланма пуçланă вăхăтра кун çути курнă. Йăлт çĕнĕлле, йăлт урăхла. Çĕнĕ пурнăç ачи социаллă пурнăçăн тĕпсĕр аварне путмасть: çул çитсен тантăшĕсемпе пĕрле шкула каять, çамрăклах колхоз производствине тырă акма-вырма кӳлĕнет. Пурăнмалла, тăван яла çĕклемелле, анчах... Тĕнчере иккĕмĕш тĕнче вăрçи вăйилме пуçланă вăхăт. Никамăн та чĕри вырăнта мар. Сывлăшра вăрçă шăрши...

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçланнă хыççăн 18 çулхи вăй питти каччă та тăванĕсемпе сыв пуллашса 1942 çулхи çурла уйăхĕн 23-мĕшĕнче нимĕç фашисчĕсемпе çапăçма фронта туххса каять. Вăрçă çулĕсенче пирĕн ентеш оруди батарейинчи красноармеецран пуçласа 76 мм оруди командирне çити ӳссе çитет.

Пĕрремĕш çапăçăва Иван Курск патĕнче 1943 çулта кĕрет. Йывăр аманать. Госпитальтен сывалса тухсан – каллех фронта. Малтанах пĕр юхан шыв урлă кĕпер тунă çĕре хутшăнни паян та асра. Пирĕн салтаксем 5 талăкра 200 метр тăршшĕ кĕпер туса хута яраççĕ. Ку паттăрлăх тепĕр куннех 15 çар эшелонне фронта иртме çул уçать.

Фронт талккишпех пынă хаяр çапăçусенче хăюлăхпа çеç палăрнă Иван Алексеевич орденне те, медальне те пĕрре мар тивĕçнĕ. 1944 çулхи утă уйăхĕн 13-мĕшĕнче Волын облаçĕнчи Изерц хулишĕн пынă çапăçусенче хăйсен самоходка орудийĕпе пирĕн ентеш расчечĕ фашистсен «Фердинанд» танкĕпе куçа-куçăн çапăçăва кĕрет. Пĕтĕмлетӳ: танк тĕтĕм йăсăрлантарса пĕр вырăнта «хытса» ларать. Çакăнпа пĕрлех артиллеристсем тăшманăн 30 салтакне леш тĕнчене ăсатаççĕ. Ку паттăрлăхшăн И. Васюхина Мухтав орденĕн 3 степенĕпе наградăланă.

Вăрçă кĕрленĕ вăхăтра юнлă çапăçусем самантлăха та чарăнман. 1945 çулхи çуркунне Котбус хулишĕн пынă хаяр çапăçусенче те Юнкăпуç каччи паттăрлăх кăтартать. Кунта вăл тăшманăн 4 контратакине сирсе яма хутшăнать. И. Васюхин командирăн паттăр расчечĕ тăшмана сывăха яманнипе пĕрлех çапăçу вăхăтĕнче унăн пулемет точкине тата 23 салтакне тĕп тăвать. Ку паттăрлăхшăн та пирĕн ентеш Мухтав орденĕн 3 степеньне тивĕçет.

Фронт линийĕ тахçанах Совет Союзĕн территорийĕнчен Хĕвел Анăçнелле куçнă ĕнтĕ. Апла пулсан та ирсĕр тăшман парăнма васкаман. 1945 çулхи пуш уйăхĕн 10-мĕшĕнче пирĕн çарсем умне фашистсен вăйлатнă ушкăнĕ тухать. Вăрçă Турри – артиллери – кунта хăйне уйрăмах ырă енчен кăтартать. Артиллеристсем вăрçă наукине пĕлсе çапăçни, тăшман позицийĕсем çине татти-сыпписĕр вут-çулăм тăкни пирĕн вун-вун салтакăн пурнăçне сыхласа хăварать. Çăмăл пулман ку çапăçусем, анчах совет салтакĕн çирĕплĕхĕпе ăсталăхĕ кашниннех çĕнтерӳпе тухнă. Çак çапăçусем хыççăн Иван Васюхина фашистсен вăйлатнă ушкăнне тĕп тума хутшăнса паттăрлăх кăтартнăшăн «Паттăрлăхшăн» медальпе наградăланă.

1945 çулхи пуш уйăхĕн 15-мĕшĕнче Белачув хулине ирĕке кăларассишĕн те хаяр çапăçусем пулса иртеççĕ. Вĕсенче 270-мĕш стрелоксен полкĕн пирĕн ентеш И. Васюхин ертсе пынă 76 мм орудисен батарейи тăшманăн контратакисене сирсе фашистсене те, вĕсен хăватлă техникине те йышлă тĕп тунă. Çакăншăн Юнкăпуç каччине Тăван çĕр-шыв Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе чысланă.

– Аслă Çĕнтерӳ çăмăллăн килмерĕ. Унăн алтарĕнче – вуншар миллион совет салтакĕпе мирлĕ çынсен пурнăçĕ. Çавăнпа та паянхи Раççейре вĕсене манманни, вĕсен паттăрлăхĕпе мухтанса çамрăксене патриотла воспитани пани – паянхи пурнăçăн мирлĕ фрончĕ. Кунта та пирĕн çĕр-шыв интересĕсене çухатас марччĕ. Паянхи пурнăçра Аслă Çĕнтерĕве тивĕçлипе чыслакансене историе юлнă Аслă вăрçă салтакĕсен ячĕпе пысăк тав. Эсир çакна тивĕçлипе тума пултарни çĕр-шыв ирĕклĕхĕшĕн миллионшар çын юн тăкнине шута хуни пулать, – терĕ Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕ. Вăрçă хыççăнхи мирлĕ пурнăçра та вăл алă усса ларман, хăйне шанса панă ĕçе такам тăвасса кĕтмен. Район хаçачĕпе туслă çыхăну тытса çамрăксене патриотла воспитани парассинче Иван Алексеевич пурнăçланă ĕç те яланах малтисен ретĕнче пулнă.

Паянхи сăн ӳкерчĕкре эсир Иван Алексеевич Васюхина çывăх çыннисемпе пĕрле куратăр. «Атте, хуньăм, асатте тата аслă асатте тунă ырă ĕçсем çухалмаççĕ, манăçмаççĕ. Пирĕн тĕллев – вĕсене аталантарса çĕнĕ пурнăç парасси. Эпир çакна тума пултаратпăр», – теççĕ вĕсем ветеранăн канлĕ пурнăçне сыхлассипе хăйсен паянхи пĕрремĕш тивĕçĕ пулнине палăртса.

– Йывăрлăхсене çĕнсех пурнăçăма телейлĕ ирттертĕм тетĕп. Никам умĕнче те вăтанмалли, пит хĕретмелли çук манăн. Çывăх тăванăмсем те паян кашниех çĕр-шыва юрăхлă ĕçсем тăваççĕ. Çакăншăн хĕпĕртетĕп эпĕ ватлăхра. Вăй хавшарĕ пулсан та хамăн пурнăçăмăн çимĕççисемпе савăнатăп, – терĕ мана ăсатма сĕтел хушшинчен тăрса кăкăр тулли медаль-орденлă ĕçпе вăрçă ветеранĕ.

**А. БЕЛОВ.**

**Миграци службипе çыхăнса ĕçлесси**

# Регистраци учетĕнчи пысăк çĕнĕлĕхсем

***Саккунсем улшăнни Раççей гражданĕсене хăй пурăнакан вырăнта регистрацилесси тата унтан тухасси çине те витĕм кӳрет. Çĕнĕ çултан тытăнса гражданина Раççей Федерацийĕн территорийĕнче хăй пурăнакан вырăнта регистрацилемме тата регистрацирен тухма çĕнĕ йышши йĕрке вăя кĕчĕ. Паян миграци службинчи çĕнĕлĕхсем пирки хамăр вулакансене каласа ăнлантарма эпир тӳрĕ калаçăва федераллă миграци службин районти территори пункчĕн пуçлăхне Любовь ПЛЕЧОВĂНА чĕнтĕмĕр. Вăл çапла палăртрĕ:***

– Граждансене хăйсем пурăнакан вырăнсенче саккунпа килĕшӳллĕн вăхăтра регистрацилесси тата çак ыйтăва тĕрĕс пурнăçласси – Раççей Федерацийĕн Чăваш Республикинчи федераллă миграци службин управленийĕн районти территори пункчĕн тĕп тивĕçĕсенчен пĕри. Кун хыçĕнче вара конкретлă çынсен ĕçĕ-хĕлĕ тăрать, пурнăç аталанăвĕ сăнланать.

Эпир хамăр патăмăра килекен кашни гражданинăн ыйтăвнех вăхăтра та туллин тивĕçтерме тăрăшатпăр. Кунпа пĕрле тĕрлĕ тăтăшах çĕнĕлĕхсене алла илсе пыратпăр. Кăçалхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен кашни çыннах пырса тивекен черетлĕ çĕнĕлĕх вăя кĕчĕ. Кун пирки паян тĕплĕн ăнлантарса парас тетĕп.

Раççей Федерацийĕн 2008 çулхи раштавăн 25-мĕшĕнче йышăннă 281-мĕш номерлĕ Федераллă саккунĕпе килĕшӳллĕн («Раççей Федерацийĕнчи уйрăм саккун акчĕсене улшăнусем кĕртесси çинчен») 2014 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен тытăнса граждансене хăйсем пурăннă е вăхăтлăх пурăннă вырăнсенче регистраци учетне тăратас тата учетран кăларас ĕç çав тăрăхри федераллă миграци службин районти территори пунктне куçать. Çапла вара граждансен малашне, халăхра калашле, пропискӑна тăма тата пропискӑран тухма ял тăрăхĕн администрацине мар, пирĕн патăмăра килмелле пулать. Çавăнпа та паян хаçат вулакансене хамăрăн ĕç йĕркипе паллаштарас тетĕп. Регистраци ыйтăвĕпе эпир сире ытлари кунран пуçласа шăмат кунччен 9 сехетрен пуçласа 15 сехетчен йышăнатпăр. Кăнтăр апачĕ 13 сехетрен тытăнса 13 сехет те 45 минутчен. Вырсарни кунпа тунти кун – кану кунĕсем. Пирĕн телефон: 8(83541) 63-4-90.

Кăçалчен регистраци ыйтăвне граждансем хăйсем пурăнакан вырăнти ял тăрăхĕн администрацийĕнче татса панă пулсан, вĕсен ĕçĕ малашне çынсене регистраци ыйтăвĕпе консультаци парас шайра юлĕ.

Граждансен хăйсем пурăннă е вăхăтлăх пурăннă вырăнсенче регистраци учетне тăрас пулсан ял тăрăхĕнчен хуçалăх кĕнекинчен çырса илнине илмелле. Пурăнмалли вăл е ку çурт тĕлĕшпе унта регистрациленме шутланă гражданинăн харпăрлăх прави пулмалла. Ăна çирĕплетекен документа патшалăх регистрацийĕ, кадастр тата картографи тĕлĕшпе ĕçлекен федераллă служба учрежденийĕнчен илмелле.

Енчен те пурăнмалли пӳлĕм пай харпăрлăхĕнче пулсан ял тăрăхĕн малтанхи вăхăтра хуçалăх кĕнекинчен çырса илнине регистраци учечĕпе патшалăх пулăшăвĕ илес текене Раççейри пур гражданина та памалла.

РФ гражданĕсене хăйсем вăхăтлăх пурăннă вырăнсенче регистраци учетне тăма çак документсем кирлĕ:

– вăхăтлăх пурăнмалли вырăнта регистрациленме 1-мĕш формăпа ыйтса çырни (унта гражданинпа пурăнмалли çурт хуçи алă пусни пулмалла, ăна регистрацишĕн яваплă специалистăн алă пусса çирĕплетмелле);

– харпăр хăй кам пулнине çирĕплетекен документ;

– вăхăтлăх пурăнма ирĕк паракан хут.

РФ гражданĕсене хăйсем пурăннă вырăнсенче регистраци учетне тăма çак документсем кирлĕ:

– пурăнмалли вырăнта регистрациленме 6-мĕш формăпа ыйтса çырни;

– харпăр хăй кам пулнине çирĕплетекен документ;

– вăхăтлăх пурăнма ирĕк паракан хут.

Граждансем хăйсем пурăннă е вăхăтлăх пурăннă вырăнсенче регистрациленме тата регистраци учетĕнчен тухма ыйтса çырнисене регистраци учечĕшĕн яваплă органсене электрон мелпе те тăратма пултараççĕ. Çакна валли патшалăх тата муниципаллă услугăсен пĕрлехи порталĕ пур.

**Аслă ăрăва – тимлĕх**



# Аякри хăнасем уявпа саламларĕç

Вăрçăпа ĕç ветеранĕсен Каршлăхри интернат çурчĕ хăнасене яланах тараватъ. Çавăнпах та пулĕ кунта тĕрлĕ организацисемпе учрежденисен уявсемпе саламлама тăтăшах килеççĕ.

Кунта Шупашкарти «Промстройпроект» институчĕ уçă акционерлă общество коллективĕ пулчĕ. Асăннă çуртра хӳтлĕх тупнă кашни çынна аякри хăнасем парне парсе чысларĕç. Çавăн пекех çак ушкăнпа Шупашкар хулинчи 10 номерлĕ шкулти 7-мĕш «в» класра вĕренекенсем те çитрĕç, ачасем ватă çынсене тĕрлĕ юрă-кĕвĕпе савăнтарчĕç. Хисеплĕ ветерансемшĕн çакă чылайччен асра юлмалли пысăк уяв пулчĕ. Палăртма кăмăллă, çак коллектив кунта малтан та килсе хисеп тунăччĕ.

Аслă ăрăва тимлĕх уйăхне питĕ кăмăллă вĕт. Шупашкарти «Волгарь» авторадиоклуб ĕçченĕсем те пулчĕç хăнара, вĕсем кунта хӳтлĕх тупнă хисеплĕ ветерансене кĕнекепе чысларĕç, интерната вара баян парнелерĕç.

**В. КРЮЧКОВА, социаллă ĕçчен.**

# «Савăнăç шевли пуриншĕн те пултăр»

***Пĕтĕмлетрĕ сахал тупăшлă çемьери ачасен елккине уçса Мăн Сĕнтĕр райпо Канашĕн председателĕ Л. МАЙКОВА.***



Раççейре ялсен социаллă аталанăвĕ паянхи политика пурнăçĕнче тĕп вырăна тухса пырать. Çакна вырăнсене тухса курсан социаллă аталану калаçу шайĕнчен конкретлă ĕçсем патне куçнине куратăп. Çакăнта ырă аталанупа палăрса тăракан Мăн Сĕнтĕр райповĕ халăхшăн туса иртterекен ĕç-хĕл çинче чарăнса тăрассăм килет.

... Кăрлач уйăхĕн 3-мĕшĕ. Мăн Сĕнтĕрти «Шуçăм» кафере иртенпех уяв шевли вылять. Илемлетнĕ чăрăш тавра хĕвĕшекен ачасем чуна савăнăç кĕртеççĕ. Каламалла, райпо Канашĕн пуçарăвĕпе юлашки çулсенче çулленех Мăн Сĕнтĕрте нумай ачаллă, сахал тупăшлă çемьесем тата тăлăх ачасем валли иртterекен Раштав елки кăçал та хăйĕн тавра пысăк йыш пухрĕ – тăрăшни харама каймарĕ.

«Шуçăмри» илемлĕ тум тăхăннă чăрăш тавра ача-пăча тупăшсах вылять. Вĕсем хушшинче Юр пикесем те, «шăшипе» «аталлă кушак» костюмĕ тăхăнса килнисем те, «мулкача» хăваласа çӳрекен «кашкăр» та, аваллăхри «рыцарьсем» те пур. Ачисене кура ашшĕ-амăшĕ те бал-маскарад тумĕнчен ютшăнманни паян кунти уяв пуриншĕн те пулнине çирĕплетет. Ачасем капăр тумлă чăрăш патĕнчен уйрăлма пĕлменни, вĕсем аслисем çине ĕненӳллĕн те юратуллăн пăхни Мăн Сĕнтĕр райпо Канашĕ ку хутĕнче те хăйĕн ĕçĕн тĕллевне тупнине палăртрĕ.

– Райпори ĕçсене ыранхи куна пăхса йĕркелесе пырасси – пирĕн ырă йăлара. Иртнĕ çул миллионшар тенкĕлĕх тавар сутрăмăр, халăха тĕрлĕрен услугăсем патăмăр. Анчах мĕн пурнăçланине чикĕ тесе шутламастпăр. Ялсенчи ачасем – пирĕн ыранхи пайщиксем. Çакна ăнланса эпир вĕсемпе ачаллах туслă çыхăну йĕркелессине тĕпе хуратпăр. Хамăр райпо пăхса тăракан ялсенчи сахал тупăшлă çемьесенчи ачасем валли кăçал 100 парне хатĕрлерĕмĕр, – кăмăллăн калаçать чăрăш тавра выляса чупакан ачасене уяв парнисем валеçнĕ май Мăн Сĕнтĕр райпо Канашĕн ертӳçи Людмила Майкова.

Людмила Петровнăпа калаçса утнă хушăра пирĕн умран илемлĕ костюмсем тăхăннă Надьăпа Люба Кулеминăсем, Арсений Максимов, Элиза Морозова, Анастасия Иванова, Мария Гусева ташласа иртрĕç. Кунта тăрăшуллă пулнă Ильинка ял тăрăхне ырăпа палăртса хăвармалла. Шкул автобусĕпе ку тăрăхран Раштав елккине 27 ача килсе çитнĕ. Хĕл мучипе Юр пикене вĕсем ытти ачасемпе пĕрле (уявра пурĕ 67 ача пулчĕ) нумай вăхăт хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарчĕç. Маттуррисем Хĕл мучипе Юр пикерен тутлă кучченеçсене тивĕçрĕç.

– Экономика тĕреклĕхĕ пĕрле вăй хунинчен йĕркеленет. Хуçалăх экономики тата предприяти аталанăвĕ пĕрле пулса ыранхи куна пăхса ĕçлесен çеç ăнăçать. Ун хыçĕнче пĕри – пуриншĕн, пурте пĕриншĕн вăй хуни тăрать. Çак çыхăну Муркаш енре аслăрах ăрусем пуçарнипех тачă хутшăнура. Çĕр-шывра рынок хутшăнăвĕсем аталаннă вăхăтра Мăн Сĕнтĕр райповĕ çĕнĕ ӳсĕмсем çĕнме пултарни коллектив тĕрĕс çул çинчине кăтартать. Малашне те вăл çаплах пултăрччĕ. Анчах экономика хутшăнăвĕсен çĕнĕ тытăмĕнче те татса паман ыйтусем, пĕрле пулса тумалли йышăнусем çук мар-ха. Раштав елки районти потребительсен кооперацине халăхпа çывăхарах пулма пулăшасса шанатăп, – терĕ уява пухăннисене саламласа район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ – АПК аталанăвĕпе экономика тата муниципаллă харпăрлăх управленийĕн пуçлăхĕ В. Ананьев.

Райпо коллективĕ 4-мĕш çул Раштав елки иртterни Мăн Сĕнтĕрсем ĕçлеме тăрăшнине, çĕнĕлĕхсене ялан алла илсе пынине тепĕр хут çирĕплетрĕ. Л. Майкова хăйĕн сăмахĕнче вырăнти халăхпа ĕçлесе тулашри рынока тухма инноваци активлăхне ӳстерессi умра тăракан тĕп задача пулнине палăртрĕ. Уяв иртнĕ май çак тĕллев пурнăçланасси пирки иккĕленӳ юлмарĕ.

**А. БЕЛОВ.**

Суту-илӳ

# Çыру йĕрĕпе

**«Салам редакци ĕçченĕсем! Сирĕн пата Мăн Токшик ялĕнчен çыратпăр-ха. Пирĕн питĕ пĕлес килет. Лавккара çыртарса хăварса эрех илсе тухма мĕнле саккун ирĕк парать-ши? Арçынсем эрех илеççĕ, хĕрарăмсем тӳлеççĕ е тата сĕт укçинчен çыртарса параççĕ сутуçăсем çак шĕвеке. Хăш чухне вара лавккара ĕçлекенсем çынсемпе вашават мар, вĕсен килне кĕнĕ пекех шухăшлаççĕ пулмалла.**

**Чуна пăшăрхантаракан тепĕр самант та пур. Çулла, сĕт машини часах килеймен чухне, сакăр сехет çитиччененех эрех сутаççĕ.**

**Сиртен пулăшу ыйтатпăр».**

**Алă пуснисем пур, анчах та ячĕсемпе хушамачĕсене, ашшĕ ячĕсене уçăмлатса çырни çук.**

***Асăннă çыру тĕлĕшпе Муркаш райпо правленийĕн ертӳçипе Роза Скворцовăпа çыхăнтăмăр. Вăл çакăн пек хурав пачĕ:***

– Çак çырăва илнĕ хыççăн правлени членĕсем вырăна çитсе килчĕç. Сутуçăсемпе калаçу ирттерчĕç, вĕсене тавар туянаканпа тимлĕ те кăмăллă пулмаллине тата суту-илӳ сферинчи саккуна пăхăнса ĕçлемеллине ăнлантарчĕç.

Райпо администрацийĕн çак лавккара вăй хуракансем тĕлĕшпе асăрхаттару пулман, мĕншĕн тесен кунти сутуçăсем яланах йĕркене пăхăнса ĕçлеççĕ, хăйсен должноç тивĕçĕсене саккунпа килĕшӳллĕн пурнăçлаççĕ.

Çак ялта пурăнакансенчен ыйтса пĕлнĕ май ку лавккара алкоголь продукцине ирхи сакăр сехет çитиччен сутнă факт палăрман.

**Çырăва Р. ИЛЛАРИОНОВА тишкернĕ.**

Прокуратурăран

# Лăпкăлăх хуçалантăр

Терроризм обществăшăн пысăк хăрушлăх кăларса тăрататать. Çавна май район прокуратури ку ыйтăва яланах тĕпре тытать. Иртнĕ çул асăннă орган сотрудникĕсем вĕренӳ тата сывлăх сыхлавĕн учрежденийĕсене, пурăнмалли çурт-йĕре, халăх канăвĕн вырăнĕсене çитнĕ. Çак объектсенче терроризм хăрушсăрлăхне епле пăхăннине тимлĕх уйăрнă. Çапла вара 100 тĕрĕслев ирттернĕ, 14 хутчен асăрхаттарнă.

# Мĕншĕн тариф улшăннă?

Район прокуратурине нумай хваттерлĕ çурт-йĕрте (Муркаш ялĕ, Октябре 50 çул урамри 10-мĕш çурт) пурăнакан çынран çыру килнĕ. Асăннă объекта коммуналлă ресурспа – сивĕ шывпа – «Моргаушавтотехсервис» уçă акционерлă общество тивĕçтерет. 2013 çулхи июльтен пуçласа çав çулхи декабрьччен ку услугăпа пĕр кубла метр шывпа тивĕçтернĕшĕн 12,75 тенкĕ тӳлеттернĕ, тĕрĕссипе вара тариф – 12,59 тенкĕ. Саккуна пăснăшăн организацие асăрхаттарнă.

**П. МАКЕЕВ, прокурор пулăшуçи.**

Пирĕн пата çыраççĕ

# Чăннипех ăстасем

Нумаях пулмасть Мăн Сĕнтĕрсене Муркашри ветерансен хорĕ хăйĕн концерчĕпе чăннипех савăнтарчĕ. Унччен маларах район хаçатĕнче асăннă хора Ярапайкассисем питĕ кăмăлласа йышăннă пирки çырнăччĕ. Юрий Жуков тĕлĕнмелле коллектив йĕркелеме пултарнă.

Хальхи вăхăтра телевизорпа та, радиопа та чуна килĕшекен юрăсем итлейместĕн. Ытларах ют çĕр-шыв юррисем янăраççĕ. Çитменнине акăлчан чĕлхи хуçаланать. Çурма çарамас тăхăнса сцена çинче пăркаланнине пăхни йăлăхтарать.

Муркашсем вара чăн-чăн чăваш тата вырăс юррисемпе тарăн шухăша яраççĕ. Программăна ертсе пыраканĕ пирки те тĕрĕс çырнă. Нина Петрова пултарулăхĕ куç умĕнче.

Мăн Сĕнтĕрсем çак туслă коллектива тата унăн ертӳçине Юрий Жукова тав сăмахĕ калаççĕ, Çĕнĕ çулпа саламлаççĕ, пурне те çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, ăнăçу сунаççĕ.

**П. ВОРОБЬЕВ.**

**Василий Сипет**

# Хăлхасăр, куççăр вăрманта

***(Повесть сыпăкĕ)***

**(Малалли. Пуçл. иртнĕ номерсенче).**

Çамрăксем çак тĕллевпе тĕттĕм çапнă ĕнтрĕкре кирлĕ япаласем шырама пуçларĕç.

Вунă – вун пилĕк утăм пек çыран хĕррипе тăвалла, кимĕ станцийĕ патнелле, хăпарсан, вĕсен куçĕ тĕлне будка еверлĕ лăпсăр-лапсăр çуртпа юнашар ĕретсĕр пăрахкаланă кивĕ, çĕрĕк хăмасен купи лекрĕ (вĕсене такам вутă вырăнне çунтарма пухнă пулас). Каччăсем çак купаран хăйсен çӳллĕшне яхăн, çирĕм сантиметр сарлакăш тăватă хăма суйласа илчĕç те кимĕ патне туртса-çĕклесе пычĕç. Кĕçех çак «строительство материалĕсем» кимĕ айĕнче, çумаçумăн йĕркеленсе выртса, пружинăсăр «матраса» çаврăнчĕç.

Анчах «матрасĕ» хытăрах çав, ăна «çемçетсен» татах аван пулĕччĕ те. «Çемçе материал» вара чылайччен шырама тиврĕ. Юлашкинчен вĕсем çӳп-çап пухмалли пысăк тимĕр ещĕк патне çитсе тухрĕç. Кунта тахăшĕ çĕрĕкçарăкпа пĕрле чăпта михĕсем те пăрахса тултарнă иккен. Акă вăл, мĕн кирли! Çамрăксем михĕсене (пурĕ 6) пĕрерĕн-пĕрерĕн пӳрне вĕççĕн çĕклеçĕкле, тусан пар-пар вĕçтеревĕçтере тĕрĕслерĕç – пурте вĕсем юрамине тухнă, кавраннă иккен, анчах «хытă матраса» «çемçетме» шăпах меллĕ.

Михĕсене пурне те кимĕ патне йăтса-йăтăрласа пычĕç, кĕçех вĕсем, михĕсем, «хытă матрас» çине типтерлĕн сарăнса выртрĕç. Пĕчĕк «вителĕк» валли те юлчĕç.

«Хытă минтер» вырăнне вара пĕчĕк хăма таткисене усă курма тиврĕ (ывăнсан, вут сыппи те мамăк...).

Питех те тутлă пулчĕ кунĕпех хула «тăршшĕпе сарлакăшне виççе» ĕмпĕлтетнĕ, çурăма-çурăммăн выртнă каччăсен ыйхи çак «люксра» (Улатимĕр вара тĕлĕкре çĕрĕпех темле шап-шурă пĕлĕт çинче Полинăпа таçталла вĕçрĕ, анчах, тĕлĕнмелле, çак пĕлĕт вĕçнĕçемĕн тĕксĕмленсе-тĕксĕмленсе пычĕ те юлашкинчен пач хуралса ларчĕ), ир енне çеç, тухăç майĕпен кĕренленекен кăвак чечеке ларнă чух, çурçĕр енчен сивĕ çил те кастарса вĕркеленине пула, вĕсене хытах, шăлĕсем пĕр-пĕрне тĕкĕнмиех çатăрларĕ тăр-тăр чĕппи, пĕтĕм шăмма-шакка витĕрех илчĕ. Аяк шăмми те, чĕр куççи чашки те ыраткаларĕ вĕсен.

Хăйĕн сăн-питне вылянчăклăн, лапчăткаласа-кукăрткаласа кăтартакан Атăл (ун варрипе халĕ, çăра хура тĕтĕм палкатса, шыва кустăрмисен çунаттисемпе тапăчпа çапнă пек пĕр çемĕллĕн çатлата-çатлата, икĕ хутлă шурă пăрахут тăвалла вăраххăн шăвать) шывĕпе, ывăçласа ĕçмеллех тасаскерпе, çăвăнкаласан, сăмса тутрипе сĕртĕнкелесен, каччăсем çывăхри чиркӳ чанĕ тĕнкĕл-тĕнкĕл тунă майĕн ĕнертен юлнă им-сим юлашкисене çырткаларĕç те хырăм картне лартаймасăрах пасаралла таплаттарчĕç...

Çитсен, пасара кĕмелли алăк çумнех тăчĕç.

Улатимĕр алăри сехетне салтрĕ те иртен-çӳрене «çутă пичĕ-çаврашкипе кăчăк турткалла» сулахай ал лаппи çине хучĕ. Пасара пыракансем, кĕрен-тухан çамрăксем çине пĕрре тĕлĕнсе, тепре шиклĕн пăхкаласа илеççĕ (ку сехет такам кĕсйинчен йăкăртнăскер мар-ши тесе иккĕленеççĕ пулас).

Сасартăк инçех те мар, Чул хула ячĕллĕ урам енчен, кĕтесри çурт хыçĕнчен, хулан шав пĕр пек вăшăл-вăшăл сĕрлевне темле хĕрарăмăн илес-милес хурлă-ӳпкевлĕ кăшкăравĕ хупласа хучĕ:

– Ай-й! Пулăшă-ăр! Пулăшă-ă-ăр! Чикансем çаратса кайрĕ-ĕ-ĕç! Милици-и! Милици-и-и! Пулăшă-ă-ăр!

Улатимĕрпе Кĕçтук пуçĕсене шăри-шари сасăсем еннелле палт çаврăнчĕç. Хыççăнах çĕмĕрлешекен сасăсем илтĕннĕ тĕлтен чикан майрисем урам урлă тепĕр еннелле кушак пек йăпшăнса чупса каçни, унтан çавскерсем çамрăк хăвалăхалла вăштик «чăмса» çухални курăнчĕ.

– Ĕнер пире сăпсалла çыпăçнă чикан майрисем! – куçне чарсах ячĕ Кĕçтук.

Улатимĕр ăшĕнчен йĕклĕ туйăм çĕкленсе хăвăрăлса тухрĕ, чикан майрисем çинелле вĕçтернĕ куçĕсем, çивĕчленсе, сиввĕн хĕмленсе илчĕç, анчах хăй нимĕн те каламарĕ.

Пулăшу ыйтса, пĕтĕçмен сăмахсем кала-кала, хĕрарăм халĕ ӳлесех макăрчĕ. Кĕçех ун патнелле милици машини çĕмĕрттерсе иртсе кайрĕ.

Çамрăксем ĕнтĕ хăйсене чикан майрисем сĕмсĕррĕн чике тăршшĕ лартса хăварнине пĕтĕмпех ăнланчĕç, çав вăхăтрах хальлĕхе улталамалли, куç пăвмалли мелсене пĕлмесĕр, курма мар, кун пек япаласем çинчен нихăçан та илтмесĕр, «Ан суй! Пур санăн укçа! Шăлаварун хыçалти вĕче кĕсйинче вăл!» тенĕ сăмахсене асран кăлараймасăр лешсем чăнах асамçăсем пулни пирки вĕсен, Кĕçтукпа Улатимĕрĕн, иккĕленĕвĕ ăшра тарăн тымарах яраймарĕ. Те Турă, те усал пуçтарса илчĕ вĕсен укçине. Унсăрăн еплеха пӳрнепе те тĕкĕнмесĕрех йăп! çухалтăр вăл?

– Юрĕ, ку пите пĕçертекен, ват йӳççиллĕ тамаша çинчен хальлĕхе чăн та, параппан та çапмăпăр. Унсăрăн хула çеç мар, ял кулли те пулса тăрăпăр тата. Пуçна çухатсан та, чысна ан çухат теççĕ, – куламçи туса, шик кĕрĕкĕ айĕнчен ытла та сăпайлă сасă хиркелесе кăларчĕ Кĕçтук.

Улатимĕр, унпа килĕшсе, пуçне çеç сĕлтсе илчĕ. «Полина хăлхине çеç ан кĕтĕрччĕ тата ку айванла ăнсăрт», – ял кулли пуласран çеç мар, çĕр çинчи пурнăççăр пуçне ниме те ĕненмен юратнă хĕрĕ умĕнче тăрпалтая, шулапи витĕнмен тăрная юласран шикленсе те хĕсĕнсе илчĕ вăл.

Çак вăхăтра вĕсем патне тавар туянакан – вăтам çулсенчи тăрмаланчăк хура çӳçлĕ, йăпшак кĕре питлĕ, янах таврашне шăрт пек сухал карталанса сăрăннă, «хура ĕç» çи-пуçне тăхăннă мăтьăркка арçын – пырса тăчĕ. Вăл Улатимĕр сехетне алла илчĕ те шăрçи пысăкланса тĕксĕммĕн курăнакан çутă куçĕпе хистенсех, тĕпчевлĕн циферблат çине тимлерĕ, унтан пĕр кĕске çемĕллĕн чăк-чăк-чăк-чăк сас паракан сехете самаях хăлхи патĕнче тытса тăчĕ.

– Мĕн чухлĕ кĕлетĕн? – терĕ вăл юлашкинчен.

– 5 тенкĕ. Магазинта кун пек сехетсем 10 тенкĕ тăраççĕ.

– Ма йӳнĕпех сутан?

– Укçа кирлĕ. Халех. Вăн, çăкăр илмелĕх те укçа çук пирĕн.

– Ма ун пекех тата?

– Çухатрăмăр çав укçа иксĕмĕр те.

– Епле майпа?

Улатимĕр хаш сывласа илчĕ:

– Ку ĕнтĕ вăрăм «истори»...

**(Малалли пулать).**

# Кил тата хушма хуçалăх



## Лайăх упранать

Тип çăва вĕреме кĕртĕр. Сивĕнсен кашни çур литр çу пуçне 10 тумлам йод тумлатăр. Лайăх типĕтнĕ ыхрана çак хутăша чиксе кăларса хаçат çине сарса хурăр. Типсен йывăç ещĕке куçарăр. Ыхра тĕпелтех чипер хĕл каçать.

Лаша çулталăкĕ

# Юлан ут ялта хисепре



*Пурнăç хăвăрт улшăнса, аталанса пырать. Тăтăшах пурнăçа çĕнĕ технологисем кĕртетпĕр, çĕнĕлле ĕçлеме тăрăшатпăр. Сăмахпа калатпăр та ĕçне те сахал мар пурнăçлатпăр. Анчах килти хушма хуçалăх тытакан кашни хресченех хăватлă «хир карапĕсем», суха агрегачĕсемпе тырă акма сеялкăсем туянма вăй-хăват çитереймест. Кун пек чухне асатте-асаннесен ĕç вăйĕпе ĕçлесси ял çыннишĕн пысăк тĕкĕ пулса тăрать. Пытармăпăр, лаша – ялта пурăнаканшăн тата килти хушма хуçалăх тытаканшăн – тĕп пулăшуçă. Ĕлĕкренех халăхра лаша çур пурнăç тесе ахальтен каламан ĕнтĕ. Çавăнпах пулĕ ялсенче лашапа туслисем паян йышлă. Килти хушма хуçалăхра нумайăшĕ вĕсен пулăшăвĕпе усă курма тăрăшать. Усă кураççĕ те.*

**А. БЕЛОВ фотоэтючĕ.**

# Кăрлач – хĕл патши

Сад-пахчаçăн уйăх календарĕ

***Сад-пахчара та, пӳлĕмри ӳсен-тăран тĕнчинче те – малашлăх ĕçĕсене пăхса тĕллевсене палăртмалли тапхăр. Кăрлач сивви çак ĕçе лăпкăлăхра пурнăçлама май парать: кашнин тĕлĕшпех çиччĕ виççе пăхмалăх вăхăт пур.***

***Сивĕ патши, хĕл тымарĕ тата хĕл тăрри тесе ăна ахальтен каламан ĕнтĕ. Çак уйăхри сывлăшăн вăтам температури 10,3 градус сивĕ пулсан, термометр 1882 çулта 4 градус ăшă, 1940 çулта 51 градус сивĕ кăтартнă. Çакнашкал кăра уйрăмлăхсене пĕлсе тăрса кăрлач уйăхĕнчи сад-пахча ĕçĕсем тĕлĕшпе те килти хушма хуçалăх тытаканăн асăрхануллă пулмалла. Кăрлач уйăхĕ хăйĕн сиввисемпе çулленех тăлăп тăхăнтартни пирки те манмалла мар, Хĕл мучи хаярлăхне те шута хумаллах.***

***Ку уйăх пирки халăх сăнавĕнче çапла каланисем пур. Кăрлач типĕ те сивĕ тăни тата юхан шывсенче шыв вăйлă чакни – çитес çу кунĕсем типĕ те шăрăх пуласса. Çак уйăхри тумла пăрĕ вăрăм та таса пулсан – тыр-пул тухăçĕ ăнĕ.***

***Уйăх календарĕпе килĕшӳллĕн сад-пахча ĕçĕсем кăрлачра çапларах пулмалла.***

**Кăрлач уйăхĕн 11–13-мĕшĕсем.** Пӳлĕмри ӳсен-тăран патĕнчи тăпрана кăпкалатмалла, унти сăтăрçăсемпе çителĕклĕ кĕрешмелле.

**Кăрлач уйăхĕн 14–16-мĕшĕсем**. Пӳлĕмри ӳсен-тăрана куçарса лартма юрать. Хĕллехи теплица валли пахча çимĕç вăрлăхне акăр. Симĕсле усă курма петрушка тата хĕрлĕ кăшман акмалла. Хĕл каçма упрама хунă георгин, гладиолус, бегони тымарĕсене пăхмалла.

**Кăрлач уйăхĕн 16–18-мĕшĕсем.** Уйăх тулнă вăхăт. Пахча çимĕç акма-лартма тата çĕрпе ĕçлеме мелсĕр кунсем.

**Кăрлач уйăхĕн 18–21-мĕшĕсем**. Симĕсле усă курма акнă-лартнă пахча çимĕçе тата пӳлĕмри чечексене шăвармалла тата органикăллă удобренипе апатлантармалла. Пӳлĕмре симĕсле усă курма петрушка тата хĕрлĕ кăшман вăррисене акма юрăхлă вăхăт. Чечек куршакĕсенчи тăпрана кăпкалатмалла. Пӳлĕмри ӳсен-тăрана апатлантармалла. Упрама хунă сапассене тĕрĕслемелле. Садра юр тытассипе тимлемелле.

**Кăрлач уйăхĕн 21–22-мĕшĕсем.** Калча тума çĕр улми вăрлăхĕ, петрушка тымарĕ, шăлсăр сухан акмалла. Ӳсен-тăран сăтăрçисемпе кĕрешессине кая ан хăварăр. Ӳсен-тăрана шăвармалла тата апатлантармалла.

**Кăрлач уйăхĕн 22–24-мĕшĕсем.** Ӳсен-тăрана акмалла-лартмалла, вĕсене шăвармалла. Тăпра кăпкалатмалла, вăрлăхпа минераллă удобрени туянмалла. Сад-пахчара юр тытмалла.

**Кăрлач уйăхĕн 24–25-мĕшĕсем.** Ытлашши ӳсен-тăранран хăтăлмалла. Ӳсен-тăран вăрлăхне акма тата куçарса лартма тата апатлантарма юрăхлă вăхăт. Вăрлăх, хӳтĕлев хатĕрĕсем, стимуляторсем, удобренисем туянма тăрăшăр.

**Кăрлач уйăхĕн 25–27-мĕшĕсем.** Хĕлле çурăлакан чечексене шăвармалла тата апатлантармалла. Нумай çул ӳсекен чечексене калчалăх акмалла.

**Кăрлач уйăхĕн 27–30-мĕшĕсем.** Калча ӳстерме çĕр хатĕрлемелле. Тăпрари сăтăрçăсемпе кĕрешмелле. Çуркунне валли паха вăрлăх тата удобрени туянăр. Хĕл саппасĕсене тепĕр хут тĕрĕслĕр.

**Кăрлач уйăхĕн 30–31-мĕшĕсем.** Çĕнĕ уйăх вăхăчĕ. Ӳсен-тăран вăрлăхне акма-лартма сĕнместпĕр. Пӳлĕмри ӳсен-тăрана шăварăр.

Тĕпелте

# Пан улмипе – тем те пĕр

***Хĕвел Тухăç календарĕпе лаша çулталăкне кĕтĕмĕр. Кашни кун эпир унран ыррине кĕтетпĕр. Акă умра Кивĕ çĕнĕ çул. Ăна анлă кĕрекере савăнăçлă уявласси те – халăхăмăрăн ырă йăлинче. Нумайăшĕ çак кунран эпир чăн-чăн Çĕнĕ çула кĕретпĕр тесе калать. Халăхăмăр йăлинчен иртсе каймăпăр. Эпир те çак уява тивĕçлипе хатĕрленсе кĕтсе илĕпĕр. Лаша пан улмине тиркеменрен эпир паян хамăрăн вулакансене унран епле çимĕçсем хатĕрлессипе паллаштарма кăмăл турăмăр. Ĕçлесе пăхăр, хăвăр шухăшсене хушăр – сирĕн уяв сĕтелĕ пуянрах та илемĕрех пулĕ, чĕннĕ хăнасен кăмăлĕ хăпарĕ, хăвăр та хĕпĕртесех кивĕ Çĕнĕ çула кĕтсе илĕр.***

### ПЕЧЕНИ

**2 пан улми, 200 грамм финик, 100 грамм услам çу, 4-шар апат кашăкĕ сахăр песукĕ, кăшт пыл, 1-шер стакан çăнăх, сĕлĕ кĕрпи (хăрпăкĕ), 1 пакет разрыхлитель, 1 чей кашăкĕ лимон сĕткенĕ, кăштах аçтăрхан măйăрĕ кирлĕ.**

Финик вăррисене кăлармалла та çимĕçе турамалла. Пан улмисене çуса тасатмалла та 4-шар пая пайламалла, вăррисене кăларса шултра теркăпа хырмалла.

Кастрюльте услам çу ирĕлтермелле. Унта сахăрпа пыл хушмалла, сахăр ирĕличчен лайăх пăтратмалла. Финик ямалла та вăйсăр çулăм çинче 4 минут пăшăхламалла. Çăнăх, сĕлĕ кĕрпи (хăрпăкĕ), разрыхлитель, пан улмипе лимон сĕткенĕ хушмалла. Лайăх пăтратмалла. Çак вăхăтра духовкăна 190 градуса çити вĕрилентермелле. Хатĕр хутăша пергамент сарнă çатма е противень çине сарса хурса тăпăл-тăпăл вырнаçтармалла, тикĕслемелле. Çиелтен аçтăрхан măйăрĕпе илемлетмелле. Духовкăна лартса çур сехет пĕçермелле. Ун хыççăн духовкăна 160 градуса çити чакарса унта татах 10 минут тытмалла.

### ТУЛТАРНĂ ПАН УЛМИ

**2 пан улми, 1 апат кашăкĕ пыл, 20 грамм вĕтетнĕ măйăр, 50 грамм иçĕм çырли, 5 грамм корица, 30 грамм хĕрлĕ хурлăхан илмелле. Соус хатĕрлеме 250 грамм хăймаллă сĕт (сливки), 2 çăмарта сарри, çур пакет ваниль сахăрĕ, 50 грамм сахăр кирлĕ.**

Пан улмисене çуса типĕтмелле, тăррисене касса шăтăк тумалла.

Иçĕм çырлине 2 – 3 хут çумалла. Măйăра вĕтетмелле. Хĕрлĕ хурлăхана (хĕллехи вăхăтра компотри çырлапа та, шăнтнипе те усă курма юрать) иçĕм çырлипе тата măйăрпа хутăштармалла, корица сапмалла. Пулнă хутăша пан улми ăшне вырнаçтармалла.

Пан улмисене çатма е противень çине хумалла та пыл сĕрсе тухмалла. Хыççăн 220 градуса çити вĕрилентернĕ духовкăна лартмалла, 20 минут пĕçермелле.

Соус хатĕрленĕ чух çак йĕркене пăхăнăр: хăймаллă сĕте (сливки) вĕрилентермелле те унта çăмарта саррипе сахăр тата ваниль сахăрĕ хушса тăтăш пăтратса кăштах çăраличчен пĕçермелле.

Духовкăран кăларсан пĕçернĕ пан улми çине çак соуса сĕрмелле.

### ТОРТ

**Чуста хатĕрлеме 3 çăмарта, 100 грамм сахăр, 150 грамм услам çу, 250 грамм çăнăх, 30 грамм сĕт, 50 грамм вĕтетнĕ аçтăрхан măйăрĕ, 2 пан улми, 15 грамм разрыхлитель, 2 апат кашăкĕ măкăнь, 3 грамм корица, 30 грамм услам çу, 50 грамм вĕтетнĕ сухари кирлĕ пулаççĕ. Пулас торта илемлетме – пысăк 2 пан улми, 30 грамм аçтăрхан măйăрĕ, 2 апат кашăкĕ пыл илмелле.**

Услам çупа сахăр песукне шап-шурă хутăш пуличчен çăрмалла. Çăмартана кăпăшлантармалла та маларах хатĕрленĕ хутăша ямалла, ăшă сĕт хушмалла.

Пĕр пан улмине тăваткалласа турамалла. Ун çине сĕтпе çăмарта тата сĕт хутăшне ямалла. Çакăнтах вĕтетнĕ măйăр сапмалла.

Разрыхлитель тата măкăньпе корица хутăштарнă çăнăх ямалла, чуста çăрмалла.

Чустана çу сĕрнĕ тата вĕтетнĕ сухари сапнă ятарлă çатмана е противене вырнаçтармалла. Тепĕр пан улмине çӳхе касăксем туса касмалла, веер пек илемлĕн хурса тухмалла. 180 градуса çити вĕрилентернĕ духовкăна лартса 25 минут пĕçермелле. Пиçнĕ хыççăн кăштах сивĕнсен торта сарлака хитре турилкке çине хумалла, аçтăрхан măйăрĕпе илемлетмелле, кăштах пыл сĕрмелле.

**А. СЕРГЕЕВА повар хатĕрленĕ.**
Катькас ял тăрăхĕ.

Авалхи чăваш календарĕ

# Çулталăкăн пĕрремĕш уйăхĕ

Январь теме хăнăхнă эпир ăна. Чăн чăвашла вара ăна кăрлач тетпĕр. Кăрлач – çулталăк пуçламăшĕ. Йывăр çулсенче мăн кăрлач тата кĕçĕн кăрлач пулнă. Кĕçĕн кăрлач йывăр çулсенче кăна килекен хушма уйăх шутланнă, măшăр çулсенчи вара мăн кăрлач кăна пулнă. Авалхи уйăхсем хальхи уйăхсемпе пĕр пек килмен. Чăвашсен мăн кăрлачĕ хальхи декабрь вĕçĕпе январь уйăхĕн пуçламăшне, кĕçĕн кăрлач январь пĕтмĕшĕпе февраль пуçламăшне тӳр килнĕ.

Эпĕ ача чухне манăн мамак Ирина Илларионовна Шурнова (Енисеева) тĕрлĕ уйăхсем пирки каласа паратчĕ. Манăн мамак Енисеевсен йăхĕнчен тухни мана нумая вĕрентрĕ. Мамак 1911 çулта çуралнă. Унăн пиччĕшĕ Борис Илларионович – 1898 çулта. Борис Илларионович пирки район хаçатĕнче материал та пичетленнĕччĕ. Вĕсен аслă ăрăвĕсем питĕ ăслă çынсем пулнă. Мамак чăвашла калаçнă чухне те пирĕн пек калаçмастчĕ. Ашшĕ Илларион пулнă, унăн ашшĕ – Несе (Енисей), Несе ашшĕ – Ярабай. Хамăр районти Ярапайкасси ялне пуçараканĕ вăл пулнă.

Малтанах Ярабай Атăл юхан шывĕн тепĕр енче Амакçарта çармăссемпе пĕрле пурăннă. Вырăс патшисемпе тачă çыхăну тытнă. Вăл хальхи Ярапайкасси ялне никĕсленĕ. Унтан Енисейсем пулса каяççĕ. Несе ывăлне пĕрле илет, Амакçара вара Илларион мăнукне парать. Мĕн виличченех Илларион унта пурăнать. Вилсен унтах пытарнă. Анчах Шупашкар ГЭС-не тунă май ватă кукаçин вил тăпри Атăл шывĕ айне пулса юлĕ тесе шутларăмăр. Çавна май эпир куккасемпе тата пиччесемпе çине тăрсах кукаçи вил тăприне сыхласа хăварас тесе тăрăшрăмăр. Шупашкар ГЭС-не тунă вăхăтрах Борис Илларионович Енисеев ывăлĕ Апполон кукка тимленипе (1972 ç.) Амакçар тăвĕ çине кимĕпе çӳрерĕмĕр. Паян кун та Атăл ГЭС-ĕн шывĕ унта çитеймерĕ. Шыв хĕрринчи чи çӳллĕ сăрт çинче Илларион вил тăпри çинче чулпа цементран купаланă палăк ларатьха. Çак вырăна халĕ Илларионовка хуторĕ тесе калаççĕ (Амакçар тăвĕ мар). Вăл Муркаш районĕн территорине кĕрет. Малалла – çармăссен çĕрĕсем.

Календарь пирки пуçларăм та, хамăн мамакăн ашшĕ пирки çырма пуçăнтăм. Ăна пытарнă вырăнта унăн ывăлĕ Борис нумай кирлĕ хутсем тупнă, ывăлне Апполона панă. Вĕсем хушшинче уйăхсен чăвашла ячĕсем те пулнă. Илларион вырăс патшисемпе туслă пурăннă пулин те, христианство тĕнне йышăнман, анчах та чапра пулнă.

Апполон çумĕнчи хутсене вуланине ас тăватăп (1973 çултан пуçласа). Чăвашсем уйăхсене çапла каланă: 1 – сив уйăх, 2 – хыт сив уйăх, 3 – хĕр уйăхĕ, 4 – ака уйăхĕ, 5 – хăват уйăхĕ, 6 – ӳпре уйăхĕ, 7 – утă уйăхĕ, 8 – çурла уйăхĕ, 9 – авăн уйăхĕ, 10 – шалча уйăхĕ, 11 – куштан уйăхĕ. Çапла вара мăн кăрлачпа кĕçĕн кăрлач ячĕсем те тупăнчĕç – вĕсем сив уйăх тата хыт сив уйăх. Чăвашсен календарĕнче вара кăрлач сăмах тури чăвашсем хушшинче сарăлнă. Тĕрĕссипе каласан эпĕ çакна пĕлтĕм: кăрлач тени шартлама сивĕ тенипе пĕр килет.

Вулаканăмăрсем, татах мĕнле чăваш календарĕсем упранса юлнă сирĕн çемье архивĕсенче? Шырăр, тупăр, вĕсемпе е иртнĕ вăхăтри хыпарсемпе çынсене паллаштарăр. Ан манăр, кăрлач (январь) – çулталăкăн чи сивĕ уйăхĕ. Пурăнсан курăпăр, çаплах-ши?

**Б. ШУРНОВ.**
Муркаш ялĕ.

## Администрация Моргаушского района сообщает о наличии земельных участков

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:031001:325, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:031001 для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6067 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:1298, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271101:130, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, д. Падаккасы для установки временных сооружений (гаража и погреба), площадью 46 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №312, 313 и 316, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефоны для справок: 8(83541) 62-2-66, 62-5-99, 62-7-47.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:180102:160, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д.Костеряки, ул. М.Павлова, для установки временных сооружений (сарая), площадью 39 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:100201:183, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 5857 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

### Спорт

# Хăвăрт утакансем канмаççĕ

В. Егорова ячĕллĕ Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен 1 номерлĕ ятарлă шкулĕн Муркашри филиалĕн воспитанникĕсем хăвăрт утассипе иртекен ăмăртусенче тăтăшах лайăх кăтартусемпе савăнтараççĕ. В. Киселев, С. Васильев, Р. Григорьев тренерсем патĕнче ăсталăха туптакансем акă Çĕнĕ çул умĕн те, хĕллехи каникул вăхăтĕнче те ăмăртусене хутшăнчĕç.

Декабрь вĕçĕнче вĕсем республикăри хăвăрт утассипе специализациленекен спорт шкулĕн Канаш районĕнчи филиалĕ ирттернĕ ăмăртуран черетлĕ çитĕнӳпе таврăнчĕç: Игорь Белов, Сергей Белов хăйсен ӳсĕмĕсенче 1-мĕш вырăнсене çĕнсе илнĕ, Александр Арапкин – 2-мĕш, Анна Милютина – 3-мĕш.

Январĕн 3-мĕшĕнче Муркашсен команди Элĕк районĕн уçă ăмăртăвне çитсе килчĕ. Пирĕн çамрăк спортсменсем Хĕл мучи парнисене çĕнсе илнисен йышне кĕме пултарнă. Ку ăмăртура Сергей Беловпа Лилия Степанова çĕнтерӳçĕсем пулма тивĕçнĕ, Игорь Беловпа Кирилл Чермаков (вăл Тойкилтĕри тĕп шкулта вĕренет) 2-мĕш вырăнсем çĕнсе илнĕ, Александр Арапкин 3-мĕш вырăна тухма пултарнă.

Январĕн 8-мĕшĕнче вара Муркашсем Етĕрнери ăмăртусене хутшăнчĕç. Ку хутĕнче ăнăçу чăнах та пирĕн утакансем енче пулнă темелле: С. Белов, К. Чермаков, А. Милютина, Л. Степанова 1-мĕш вырăнсене тухнă, И. Белов тата Я. Николаева (Нискасси) – 2-мĕш вырăнсене, А. Арапкин, А. Скворцова, А. Федорова – 3-мĕш вырăнсене.

Хăвăрт утассипе иртекен Чăваш Ен Кубокĕччен вăхăт нумаях юлмасть. Февральте унăн пĕрремĕш тапхăрĕ иртмелле. Муркаш тăрăхĕнчи хăвăрт утакан çамрăк спортсменсене унта хутшăнма ăнăçусем сунатпăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**


## Пĕлтерӳсем. Объявления

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 10-10.

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ**
**Тел.: 8-927-667-40-92.** 1-23.

Срочно! Вахта до Нового года! Требуются в Москву и МО: фасовщицы-упаковщицы, грузчики-комплектовщики. Жилье, питание, транспорт – бесплатно. Вахта: 20/30/45/ дней. З/п 27 000–35 000 руб. Тел: 8(8352)36-42-92, 36-42-94. 2-2.

Спутниковое цифровое телевидение
ТРИКОЛОР 200 каналов – 7500 руб. 9-10.
ТЕЛЕКАРТА 50 каналов – 3500 руб.
Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30.

ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ ВСЕХ РАЗМЕРОВ.
Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36. 9-10.

Продаю ПЕСОК РЕЧНОЙ от производителя с Шешкарского карьера. Отгрузка через электронные автовесы. Самовывоз, возможна доставка от 100 тонн.
Тел: 8-917-078-86-60, 22-86-60. 4-5.

Продаю ПЕСОК, ГРАВМАССУ от 10 до 15 тонн.
Доставка. Тел.: 8-903-065-60-58. 1-68.

**МЕТАЛЛИЧЕСКИЕ ДВЕРИ, ЖАЛЮЗИ, МЕБЕЛЬ НА ЗАКАЗ.** 5-5.
**Тел.: 8-937-955-33-00.**




**17 января в РДК с. Моргауши с 9.00 час. до 18.00 час.**

# РАСПРОДАЖА

**НОРКОВЫХ И МУТОНОВЫХ ШУБ.**

**Цены от 15 000 руб.**
**Можно в кредит без первоначального взноса (нужен паспорт).**
**Тел.: 8-987-735-40-86 Елена.**
**8-965-680-79-99 Анастасия.**




Требуется юрист.
Телефон: 62-1-54.

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ**
**Срок 1 день. Каждый 3 потолок в подарок. Кредит, рассрочка.** 5-5.
**Тел.: 8-937-955-33-00.**




Ремонт стиральных машин-автоматов и ремонт газовых (Мора и Горинье) плит. Гарантия. Быстро. Качественно. Тел.: 38-58-45, 8-927-668-58-45. 3-10.

* * *

НОВОГОДНИЕ СКИДКИ! Продаем пшеницу, ячмень, рожь. Тел.: 8-987-760-57-71, 8-919-653-25-41. 5-5.

* * *

Тюклапă утă сутатăп. Тел.: 8-906-382-72-02.

* * *

Продаю доски березовые, 4м; дрова березовые. Доставка. Тел.: 8-905-342-61-45. Алексей. 2-2.

* * *

Февраль уйăхĕнче пĕрремĕш пăруламалли хура-шурă тĕслĕ тынашки сутатăп.
Тел.: 8-927-846-16-72.

* * *

Бурение колодцев. Колодезные кольца. Доставка. Установка.
Тел.: 8-927-668-96-96. 1-10.

* * *

ПРОДАЮ ЯЧМЕНЬ, ПШЕНИЦУ И ОВЕС.
Тел.: 8-905-199-61-77. 2-5.

Ĕне, вăкăр, тына, пăру тунатпăр. Тел.: 8-987-665-02-13. 1-4.

* * *

Продаю: кирпич красный одинарный, полуторный; облицовочный всех цветов; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк; гравмассу; керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352)44-20-97. 1-12.

* * *

Продаю сено тюкованное, «Газель» 2705, грузопассажирский. Тел.: 8-919-661-09-76.

* * *

Вĕтĕ çĕр улми сутатпăр. Тел.: 8-937-37-654-69.


Тойкилтĕри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективĕ кунта нумай çул пуçламăш классене вĕрентнĕ, Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕ

**Агафья Петровна**
**ОРЛОВА**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркаш райпо коллективĕ кунта экономистра ĕçлекен В.Г. Афанасьевăн

**АМĂШĔ**

вилсе кайнă пирки çывăх çыннисемпе, тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Орининти вăтам шкул коллективĕ кунта нумай çул техслужащире ĕçленĕ Г.М. Смирновăн

**МĂШĂРĔ**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Хорнуйри шкул коллективĕ кунта нумай çул кĕçĕн классене вĕрентнĕ

**Надежда Ивановна**
**БОРИСОВА**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Совет, правление и коллектив Большесундырского райпо глубоко скорбят и выражают искреннее соболезнование заместителю главного бухгалтера райпо Любимовой Р.В. в связи с тяжелой утратой – смертью мужа

**ЛЮБИМОВА**
**Льва Афанасьевича.**

Çатракасси шкул коллективĕ кунта кĕçĕн классене вĕрентекен Л.Г. Смирновăн мăшăрĕ

**Альберт Андреевич**
**СМИРНОВ**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Çатракассинчи вăтам шкулта вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсем кунта пуçламăш классене вĕрентекен Л.Г. Смирновăн мăшăрĕ

**Альберт Андреевич**
**СМИРНОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерессĕ.

### Прогноз погоды

| | суббота 11 января | | | | воскресенье 12 января | | | | понедельник 13 января | | | | вторник 14 января | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | -1 | 0 | 0 | -1 | -1 | 0 | -2 | -4 | -6 | -5 | -2 | -3 | -4 | -5 | -9 | -12 |
| Давление мм | 735 | 731 | 728 | 729 | 730 | 732 | 734 | 735 | 736 | 735 | 735 | 735 | 737 | 739 | 742 | 745 |
| Влажность % | 97 | 97 | 97 | 96 | 98 | 98 | 90 | 92 | 90 | 94 | 94 | 94 | 98 | 91 | 85 | 85 |
| Ветер м/сек | 8 | 7 | 5 | 5 | 5 | 5 | 6 | 5 | 4 | 3 | 1 | 3 | 1 | 5 | 5 | 3 |
| | Ю | Ю | Ю | Ю-З | Ю-З | З | З | Ю-З | Ю-З | Ю-В | Ю | Ю-В | Ю | С-З | С-З | С-З |
| Солнце восход / заход | | 09:17 | 16:44 | | | 09:16 | 16:46 | | | 09:15 | 16:48 | | | 09:14 | 16:49 | |
| Луна восход / заход | | 13:24 | 04:46 | | | 14:03 | 05:47 | | | 14:48 | 06:41 | | | 15:41 | 07:27 | |


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви
ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 2 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.
Пичете панă 10.01.2014 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4931.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.